Ытти писательсен пултарулăхне те сăнасах тăнă. Н. Теветкелĕн пĕрремĕш сăвă кĕнеки çинчен «Первая книжка поэта» (Молодой коммунист. 1964. Июнĕ 17-мĕшĕ) рецензи çырнă, П. Маркин пирки «Повесть о багровом детстве» статья (Советская Чувашия. 1973. Июлĕн 13-мĕшĕ) кăларнă. А Медведев, Н. Мишутин, Я. Ухсай çинчен те ăшă та вырăнлă сăмах каланă, сахал мар çамрăк авторсене вăй илме пулăшнă. Анчах та сакна пурне те иртнĕ вăхăтпа калама тивет. Çапах та В. Н. Захаров писателĕн пултарулăхĕ пирĕнпех, унан сăнарĕсем малалла пурăнма хавхалантарса тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ талант вăйĕ, тыткăнлăхĕ, асаплăхĕ.

## *Библиографи:*

***(произведенисем)***

1. Захаров, Виталий Николаевич. Нюринге [Текст] : повесть и рассказы / Виталий Захаров. - Чебоксары, 1978. - 254 с.
2. Захаров, Виталий Николаевич. Пуд соли [Текст] : повести и рассказы / Виталий Захаров. - Чебоксары, 1972. - 175 с. с.
3. Захаров, Виталий Николаевич. Сердце человека [Текст] : рассказы / Виталий Захаров. - Чебоксары, 1968. - 95 с.
4.Захаров, Виталий Николаевич Меженица : повести и рассказы / Виталий Захаров ; составитель З. В. Романова ; редактор В. Н. Алексеев ; художник С. А. Бритвина. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2020. - 358, [2] с. : ил.,

## *Библиографи:*

***(ун çинчен)***

1. Дмитриев, А. Палăк выранне / А. Дмитриев // Ялав. – 2001. – № 2. – С. 69.
2. Михайлов, Э. Чăваш çыравçисен вырăсла хайлавĕсем / Э. Михайлов // Тăван Атăл. – 2004. – № 2. – С. 66-67.
3. Артемьев, Ю. М. Захаров Виталий Николаевич / Ю. М. Артемьев // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2008. – Т. 2 : Ж-Л. – С. 42.
14. Афанасьев, П. Захаров Виталий Николаевич // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 143-144.
5. Владимиров, Е. В. Светоч его души // Владимиров, Е. В. Голоса участия и дружбы / Е. В. Владимиров. – Чебоксары, 1992. – С. 194-207.
6. Галочкин, П. Победа Виталия Захарова / П. Галочкин // Лик. Литература. Искусство. Культура. – 2013. – № 2 (23). – С. 140-145 : портр. – (Воспоминания).
7. Галочкин, П. Победа Виталия Захарова / П. Галочкин // Канаш (Канаш. р-н). – 2012. – 26 сент. – С. 3.
8. Григорьев, Н. Г. Захаров Виталий Николаевич: 1941-1982 // Григорьев, Н. Г. Писатели Канашского района Чувашии : (жизнь и деятельность замечательных людей) / Н. Г. Григорьев. – Чебоксары, 2017. – С. 293-302 : порт., фот.
9. Захаров Виталий Николаевич // Энциклопедия чувашской журналистики и печати. – Чебоксары, 2014. – С. 148.
10. Маркин, П. В поисках смысла жизни / П. Маркин // Совет. Чувашия. – 1991. – 23 февр.
11. Маркин, П. О друге-писателе / П. Маркин // Захаров, В. Железины / В. Захаров. – Чебоксары, 1981. – С. 299-301.
12. Прокопьев, В. П. Захаров Виталий Николаевич / В. П. Прокопьев // Канашский район: энцикл. персоналий. – Чебоксары, 2014. – Кн. 1. – С. 195-196.
13. Романова, З. Встречи длиною в двадцать лет / З. Романова // Совет. Чувашия. – 2001. – 23 февр.
14. Урукова, Л. Из опыта изучения творчества П. Егорова и В. Захарова / Л. Урукова // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2003. – № 5. – С. 43-45.
15. Ялгир, П. Захаров Виталий Николаевич // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С. 67.

***Район тĕп библиотекин информаципе библиографи пайĕ***
***Пухса хатĕрлекенĕ Л. И. Евгеньева***
***Тел. 49-7-00, e-mail: library@kanash.cap.ru***

**Канаш районĕн тĕп библиотеки**

# **«Пирĕн ентешĕм – паллă çыравçă»**



***Захаров Виталий Николаевич çуралнăранпа 80 çул çитнĕ май***

**(1941-1982)**

**Шăхасан сали**
**2021 ç.**

# Талантлă прозаик та, тăлмачă та

Виталий Николаевич Захаров Вăтакас Татмăш ялĕнче колхозник çемйинче 1941 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче çуралнă. Пуçламăш пĕлĕве ялти шкулта илнĕ, 1952 çулта кил-йышпа пĕрле Пăрачкав районне пурăнма куçнă. Кунти вăтам шкулта 1957 çулта вĕренсе пĕтерсен те Братск ГЭСне тума тухса кайнă. Икĕ çул бетонщикра вăй хунă хыççăн тăван ене таврăннă, «Засурский» совхозра клуб заведующийĕнче, спорторганизаторта тăрăшнă. 1960 çулта И. Я. Яковлев ячĕллĕ пединститутăн историпе филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Республикăри «Çамрăк коммунист» хаçатра ĕçлеме тытăннă. 1963-1966 çулсенче Совет Çарĕнче службăра тăнă, унтан таврăнсан каллех редакцие çул тытнă. Республикăри писательсен союзĕн илемлĕ литературăна пропагандăлакан бюрона ертсе пынă, 1979 çулта СССР Писательсен союзĕн Аслă литература курсĕнчен вĕренсе тухнă.

М. Юрьевпа З. Романова çырнă «Писатели Советской Чувашии» библиографи справочникĕ (Шупашкар, 1988. 118 с.) палăртнă тăрăх, В. Н. Захаров литератор ĕçне 1957 çултах пуçăннă, «Молодой коммунист», «Советская Чувашия» хаçатсенче унăн пирвайхи калавĕсем çапăннă. Часах вĕсем коллективлă «В ногу с жизнью» (1966) тата «Парус» (1968) кĕнекесенче пичетленнĕ.




Писателĕн пĕрремĕш кĕнеки «Сердце человека» ятлă, Шупашкарта 1968 çулта кун çути курнă. Тата тăватă çултан «Пуд соли» кĕнеке çапăннă, унта виçĕ повесть тата çĕнĕ калавсем кĕнĕ. Çав çулах «Дружба» альманахра «Встреча с демоном» повеçĕ пичетленнĕ.

1975 çулта В. Н. Захаровăн «Бессонница» кĕнеки тухнă. Унта «Бессонница», «Лекарь души моей» повеçсем, çивĕч сюжетлă çичĕ калав кĕнĕ. «Современник» издательствăра икĕ кĕнеке çапăннă: «Нюринге» (повеçпе калавсем, 1978), «Раскаты» (повеçсем, 1984).




В.Н. Захаровăн Шупашкарта тухнă «Железины» (1981) кĕнеке хыççăмахĕнче Петр Маркин писатель çырнă **«О друге - писателе» статьяран:** «На этот раз чувствовалась творческая прочность, рассказ подкупал тонко подмеченными чертами характера, самостоятельностью мыслей, светлого языка. А вскоре в редакцию пришел сам автор рассказа «Тетя Нюра», при поздней редакции «Нюринге». Он заметно смущался, говорил отрывисто. Оказалось, у Виталия Захарова уже с доброй десяток рассказов, все они о дорогом его сердцу Засурье. Мы их тогда, помню, напечатали почти все в «Молодом коммунисте». А потом они вышли отдельным сборником «Сердце человека» в Чувашском книжном издательстве.

К тому времени Виталий Захаров уже был литсотрудником «Молодого коммуниста», охотно колесил по Чувашии, привозя из командировки материалы о молодых тружениках полей, ферм. Вечерами, когда в редакции наступила тишина, он доставал из заветного ящика стола рукописи и засиживался за ней до поздней ночи. Так создавалась его книга «Пуд соли».

…После службы в армии он создал лирическую повесть «Лекарь души моей», рассказы «Суд идет», «Наледь», «Чудная» и др.

Но мы, его друзья, чувствовали, что Виталий вынашивает что-то сокровенное, его друзья, чувствовали, что Виталий вынашивает что-то сокровенное, глубоко волнующее его и, может быть, в чем-то главное для себя.

Сам он помалкивал. И вот появился рассказ «Тревога», сразу привлекший внимание читателей. Писатель показал будни Советской Армии.

Но главные произведения о Советской Армии написаны были позже. Повесть «Бессонница» (в поздней доработанной редакции «Меженица») о




том, как круто взрослеют, становятся требовательными к себе молодые новобранцы…».

**«Вăл паян та пирĕнпе» статьяран:** «Чылай чухне писатель хай мĕн çырасси пирки нумайччен шухăшласа çÿретчĕ. Вара, сĕтел хушшине ларма вăхăт çитсен, хăвăрт, çăмăл почеркпа листа хыççăн листа çыратчĕ. Унтан вара, хăй калашле, «тасататчĕ». Часах кунта та тĕрлĕ кирлĕ сăмахсем, илемлĕ танлаштару, сĕтеклĕ метафора шыраса туртса пĕтеретчĕ. «Раскаты», «Лекарь души моей» повеçсене тата ытти калавсене çырнă чухне те хăйне шеллемесĕр ĕçлерĕ… Усанчĕ пирĕн литературăра кăйкăрăн мăшăр çуначĕ».

Ăста прозаик Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине илме тивĕç пулнă. Вăл пултарулла проза ăсти çеç марччĕ, чăваш писателĕсен кĕнекисене вырăсла куçарса кăларас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ. Г. Лучăн «И мы солдаты», Г. Красновăн «Треснутая трубка», А. Лазаревăн «Сердце девичье», И. Григорьевăн «Осенний букет» кĕнекисене, çавăн пекех А. Артемьев, А. Емельянов, В. Игнатьев, Н. Терентьев, В. Ухли тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене куçарнă.

Ытти писательсен пултарулăхне те сăнасах тăнă. Н. Теветкелĕн пĕрремĕш сăвă кĕнеки çинчен «Первая книжка поэта» (Молодой коммунист. 1964. Июнĕ 17-мĕшĕ) рецензи çырнă, П. Маркин пирки «Повесть о багровом детстве» статья (Советская Чувашия. 1973. Июлĕн 13-мĕшĕ) кăларнă. А Медведев, Н. Мишутин, Я. Ухсай çинчен те ăшă та вырăнлă сăмах каланă, сахал мар çамрăк авторсене вăй илме пулăшнă.